27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АВГУСТ
2
ЮНКУН
151 (6646) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, КАУНАС (КОВНО) хулипе крепоçне — çулйĕрсен вăрçă тĕлĕшпе паха вырăн йышăнса тăракан узелне тата нимĕçсен оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ пунктне, Хĕвелтухăç Прусси чиккисем патне пымалли çулсене хӳтĕлесе тăраканскерне, — штурмласа туртса илнĕ.

КАУНАС хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче КРЫЛОВ генерал-полковникăн, ЛЮДНИКОВ генерал-лейтенантăн, МОРОЗОВ генерал-лейтенантăн, КАЗАРЦЕВ генерал-майорăн, ПЕРЕКРЕСТОВ генерал-майорăн, ПОПЛАВСКИЙ генерал-майорăн, КАЗАРЬЯН генерал-майорăн, БЕЗУГЛЫЙ генерал-лейтенантăн, ПРОКОФЬЕВ генерал-майорăн, САМАРСКИЙ генерал-майорăн, ГЛАДЫШЕВ генерал-майорăн, ЛАСКИН генерал-майорăн, АЛЕКСЕЕНКО генерал-майорăн, ДОНЕЦ полковникăн, ЖЕКОВ-БОГАТЫРЕВ полковникăн, ГОРОДОВИКОВ генерал-майорăн, КАЛИНИН генерал-майорăн, БАБАЯН генерал-майорăн, ДРУЖИНИН полковникăн, КРАСНОВСКИЙ полковникăн, КАТЮШИН полковникăн, БИБИКОВ полковникăн, КВАШНИН генерал-майорăн, БИРСТЕЙН полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн БАРСУКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ФЕДОРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ДЕРЕШĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн БОДРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн РОЖАНОВИЧĂН, артиллери генерал-майорĕн КОРСАНОВĂН, РЯБЧУК полковникăн, ДОЛГОВ полковникăн, СТАРЫНИН полковникăн, СКВОРЦОВ полковникăн, ЖЕВНОВ полковникăн, СЕДОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн БУРДЕЙНЫЙĂН, БУЛЫГИН полковникăн, ЛОСИК полковникăн, НЕСТЕРОВ полковникăн, АНТИПОВ подполковникăн, ДУХОВНЫЙ полковникăн, БУКОВ полковникăн, ГРОМАДИН генерал-майорăн, СЕМЕНЮК полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн МАЛАХОВĂН, ВАХРУШЕВ полковникăн, КУТУЗОВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ХРЮКИНĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн САВИЦКИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БЛАГОВЕЩЕНСКИН, ЗИМИН полковникăн, ЧУЧЕВ полковникăн, ВАСИЛЬЕВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн МОЛОКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн АНДРЕЕВĂН, ПРУТКОВ полковникăн, КОРЗЕЕВ майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВĂН, ЛЕЙМАН полковникăн, ЛУКАШЕНКО полковникăн, ПОПЛАВСКИЙ подполковникăн, МЕЛЬНИКОВ майорăн, ЛИПЕЦКИЙ капитанăн саперĕсем; ПРИХОДАЙ полковникăн, ШТЕЙМАН подполковникăн, авиаци генерал-майорĕн ПТИЦЫНĂН, ТКАЧЕНКО полковникăн, АРХАРОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КАУНАС (КОВНО) хулипе крепоçне туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе часĕсене «КОВЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 1-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, КАУНАС хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, КАУНАС хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи августăн 1-мĕшĕ.

Кашни килограмм, кашни пĕрчĕ колхоз амбарне кĕтĕр!

Тырпулсене пухса кĕртесси ялхуçалăхĕнчи чи ответлă ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Тырпула пухса кĕртес ĕç — пĕтĕм халăх ĕçĕ. Тырă акас, вĕсене лайăх пăхса çитĕнтерес ĕçсене аван туса ирттерсен те, тырă сахал пухса илме пулать. Пысăк тухăçлă тырпул туса илессине тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса илни татса парать.

Тырпулсене пухса илес ĕç кĕске вăхăтра пулса иртет, ăна вăрăма тăсма юрамасть, çавăнпа та çак ĕçе колхозри мĕнпур вăя мобилизацилемелле, вăл ĕçре вăрçă вăхăтĕнчи пек, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлемелле.

Тырра вăхăтра вырас, тăкаксăр çапса пуçтарас задача — паян пурнăçламалли чи ответлă, чи паха задача. Кашни пучах колхоз итемне, кашни пĕрчĕ колхоз амбарне кĕмелле. Çакна пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырсан кăна çĕршывпа фронт валли тата колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçме çителĕклĕ тырпул туса илме пулать. Нумай колхозсем çапла ĕçлеççĕ те. Елчĕк районĕ паянхи кун тĕлне 6.120 гектар ыраш вырса пухнă. Кунта «Осоавиахим», «Вперед», «Пахарь» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем ыраш вырса пĕтернĕ те ĕнтĕ. Çак колхозсенче ĕç пахалăхĕ лайăх, тырпула тăккаламаççĕ.

Анчах та пур çĕрте те мар ĕç çакăн пек пырать. Акă, çак районри «Смычка» колхозах илер. Кунта тăкаксемпе кĕрешес ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Юлашки вăхăтра тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, кунта кашни тăваткăл метртах 11—12 пучах вырт. са юлать. Çапла вара кунта кашни вырса пухнă гектар çине 1,5—2 центнер тырă тăкăнса юлать.

«Кăçал тырпул вăйлă, пĕчĕк тăкаксем хăрушă мар», тесе шутлакан руководительсем колхоз умĕнче кăна мар, государство умĕнче те преступлени тăваççĕ. «Смычка» колхозра жнейкăсем çумне зерноуловительсем туса лартман, пучахсене алăпа тата кĕреплепе пухассине организацилемен. Колхоза ертсе пыракансен çакна ăнланмалла: кашни пучахран пĕрер пĕрчĕ тăкса хăварсан та, гектарта виçĕ миллион пĕрчĕ тăкăнса юлать, вăл вара пĕр центнер ытла пулать.

Тăкаксем тăвас мар тесе пур майсемпе те кĕрешмелле! Çакă кашни колхозникпа колхозницăшăн, кашни комбайнерпа машинистшăн, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен кашни çыншăн тĕп закон пулса тăмалла.

Тырра вăхăтра вырни кăна çитмест, ăна вăхăтра пухса çĕмеле е капана хывмалла.

Тырпула тăкаксăр пухас тени — ăна пур майсемпе те тата хăвăрт вырмаллине пĕлтерет. Пĕр вăхăтрах комбайнсемпе, жнейкăсемпе, лобогрейкăсемпе, çавасемпе тата çурласемпе те вырмалла. Вырнă хыççăнах çĕмел тумалла тата капана хывмалла. Авăн çапассине кая хăвармалла мар, çийĕнчех çапса тыррине амбара хумалла. Комбайнпа е ытти машинăсемпе вырнă хыççăн, пучахсене кĕреплепе е алăпа пухсах пымалла. Тырă выракан кашни машинăннах зерноуловитель пулмалла.

Малта пыракан колхозсем тырă пиççе çитме тытăнсанах уя шанчăклă хурал тăратрĕç. Муркаш районĕнчи «Красное Сормово», «Крестьянин» колхозсенче, Ишлей районĕнчи Сыпайкасси ялсоветĕнчи пур колхозсенче те тырпулсене кăнтăрла та, çĕрле те сыхлаççĕ. Анчах та уйрăм колхозсенче тырпулсене сыхласси çине кирлĕ пек пăхмаççĕ-ха. Елчĕк районĕнчи Карл Маркс, Тимирязев ячĕпе тăракан колхозсенче тырра сыхлассине кирлĕ пек организацилемен. Колхоз тыррипе тĕрлĕ вăрăсем усă кураççĕ, анчах правлени вĕсене ответ тыттармасть. Колхоз тыррине сыхлакансем чи шанчăклă та ответлă çынсем пулмалла. Тырра кăнтăрла та, çĕрле те сыхламалла.

Тырпул вырăнтан вырăна куçарнă чухне нумай тăккаланать. Урапасемпе, ридвансемпе турттарнă чухне вĕсен тĕпне шăналăксем сармалла, кĕлте турттаракансем тирпейлĕ ĕçлемелле. Авăн çапнă вăхăтра час-часах çумăр пулнă пирки тырă шăтать, пăсăлать. Çавăнпа та витнĕ итемсене нăхăтра хатĕрлемелле. Кашни колхозрах витнĕ итемсем, лупасайсем тата авăнсем пулмалла.

Тырра итемрен амбара кĕртнĕ чухне пĕтĕмпех виççе кĕртмелле. Кашни килограмм тырра шута илмелле. Кашниннех çакна асра тытмалла: кашни пучаха, кашни пĕрче пухса илни тăшмана çĕнтерессишĕн тăрăшни пулать.

Партипе совет тата комсомолăн ялсенчи организацийĕсен тырпула вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине кашни колхозникпа колхозницăна тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Çак кунсенче эпир Вăрнар районĕнчи колхозсемпе хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш АССР-ĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене чĕнсе каланине пичетлесе кăлартăмăр. Вăрнарсем чĕнсе каланине кашни колхозрах, бригадăрах сӳтсе-явмалла, конкретлă обязательствăсем илмелле тата вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн фронтри пек кĕрешмелле.

Халĕ, Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра пирĕншĕн кашни пĕрчĕ, кашни пучах хаклă. Çакна мĕнпур колхозниксен тĕплĕн туйса илмелле, пур ĕçре те ăна ялан асра тытса ĕçлемелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПСКОВ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, тăшманпа çапăçса, çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — халăх пурăнакан ВИСКИ, РААКВА, КОСЕЛЬКА, АЛАСТСА, ЧЕРЕМНОВА, ТУРШИНО, НАУМОВА ятлă пысăк пунктсем тата КУДУПЕ, МАЛУПЕ, СИТА ятлă чугун çул станцийĕсем.

ДАУГАВПИЛС (Двинск) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла кусса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 300 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — халăх пурăнакан ДУНАВА, БЕБРЕНЕ, КАЛДАБРУНА, ЛАШУ, ЕГЛАЙНЕ, ШЕДЭРЕС, САМАНЯЙ, АЛЕКСАНДРАВЕЛЕ, БРАДЕСАЙ, ОБЕЛЯЙ, РАГЕЛЯЙ, ВЕРИШИНАЙ, УВЕЙНЕ ятлă пысăк пунктсем тата ЕГЛАЙНЕ, МОРЕЙКЯЙ, ОБЕЛЯЙ, ГИНДВИЛЯЙ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт маневр тунине пула, тăшманпа çапăçса, июлĕн 31-мĕшĕнче ИЕЛГАВА (Митава) хулине — БАЛТИКА ТĂРĂХНЕ ХĔВЕЛТУХĂÇ ПРУССИПЕ çыхăнтарса тăракан çулйĕрсен тĕп узелне — туртса илнĕ.

УКМЕРГЕ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — ДОЛЬНЫЕ, БУБЛИ, СЛИКИ, ЖИГОВИЧИ, ПРЕЙШАГОЛА, ЖЕНЯНЫ, ЛЕПШИШКИ, ПЛЕБАНИШКИ, КАЛЬНИЦА, ПОКАЛЬНИШКИ, ГОДЛЕВО, ВЕЙВЕРЫ ялĕсем тата ЛУКШАЙ, МАВРУЦЕ, ПАЛЕМОНАС ятлă чугун çул станцийĕсем.

Пирĕн çарсем КАУНАС хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманпа хула урамĕсенче çапăçма пуçланă.

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, Литва ССР-ĕн уезд центрне МАРИАМПОЛЬ хулине, КОЗЛОВА РУДА ятлă узловой чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 900 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — халăх пурăнакан ПИЛЬВИШКИ, СУРГУЦЕ, ШУМСК, МИХАЛИН, ЛЮДВИНОВ, КРАСНА, ШОСТАКОВ, ОГАРЬНЕ, НЕРАВЫ, СЕЙНЫ ятлă пысăк пунктсем тата ЮРЕ, БОГАТА, ПИЛЬВИШКИ, ВИНЦИ, МАРИАМПОЛЬ, КРАСНА, ШОСТАКОВ чугун çул станцийĕсем.

ГРОДНО хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — халăх пурăнакан БОДБОРОВА, КОПЕЦ, ЯЗЕВО, ШТАБИН, СУХОВОЛЯ, ХОЛОРУВКА, КОРЫЦИН, КРУКОВЩИЗНА, МИЛЕВСКЕ ятлă пысăк пунктсем тата САЙНО чугун çул станцийĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем вăйлă çапăçусем хыççăн СЕДЛЕЦ тата МИНСК МАЗОВЕЦКИЙ хулисемпе çулйĕрсен пысăк узелĕсене — нимĕçсен ВАРШАВА хули патне пымалли вырăнсенчи оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ пункчĕсене — штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 500 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — РАДЗЫМИН хули, ВОЛОМИН хули, ОТВОЦК хули, халăх пурăнакан САРНАКИ, МОРДЫ, ГОЛУБЛЯ, КЖЕСЛИНОПОЛЕ ятлă пысăк пунктсем тата БРОШКУВ, ДЕМБЕ ВЕЛЬКЕ, РАДЗЫМИН, ВОЛОМИН, ОТВОЦК чугун çул станцийĕсем.

ПЕРЕМЫШЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла тапăнса пынă, 60 яла ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — халăх пурăнакан БЖУСКА, БИРЧА, ЛОМНА, ВИЙСКО, НОВЕМЯСТО ятлă пысăк пунктсем тата ГЕРМАНОВИЦЕ, НИЖАНКОВИЦЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 81 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 32 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Даугавпилс (Двинск) хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман, оборона тума майлă вырăнпа усă курса, вăйлăн хирĕç тăнă. Пирĕн çарсем 15 километр таран малалла куçнă та Еглайне ялĕпе чугун çул станцине туртса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем, татăклăн пырса çапса, тăшмана сирсе ывăтнă та çапăçса малалла куçнă. 800 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлă наступление вăйлатса пынă. Совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем, малалла çав тери хăвăрт куçса пырса, Иелгава (Митава) хулин кăнтăр енчи тулашне вăркăнса кĕрсе кайнă. Пирĕн ытти чаçсем хулана хĕвеланăçĕнчен тата кăнтăр-хĕвеланăçĕнчен çавăрса илнĕ. Лиелупе шывĕ хĕррине хĕстерсе лартнă гитлеровецсем хаяррăн хирĕç тăнă, анчах та вĕсене пуçĕпех çапса çĕмĕрнĕ. Совет чаçĕсем Иелгава хулине туртса илнĕ. Кунти çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, 2000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити, 40 тупă пĕтерсе тăкнă. 60 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен туппа персе çĕмĕрнĕ. 200 чугун çул вагонĕ, 70 автомашина, темиçе пысăк склад тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тытса илнĕ трофейăсене халĕ шута илеççĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Иелгава хули Балтика тăрăхне Хĕвелтухăç Пруссипе çыхăнтарса тăракан çулйĕрсен тĕп узелĕ пулса тăрать.

* * *

Укмерге хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсен Каунас хулинчен 5 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре выртакан Годлево ятлă тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ те, тăшманпа Каунас хулин кăнтăр пайĕнчи урамĕсенче çапăçма пуçланă. Пирĕн тепĕр соединени чаçĕсем Каунас хулин хĕвелтухăç тулашне вăркăнса кĕрсе кайнă. Нимĕçсем патне пĕр чарăнмасăр пулăшу вăйĕсем пырса тăраççĕ, вĕсем çул çинчен тӳрех çапăçăва кĕреççĕ. Хĕвелтухăç Пруссие пырса кĕмелли вырăнсене хӳтĕлекен хăватлă крепость пулса тăракан Каунас хулине тăшман хаяррăн хӳтĕлет. Пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, Каунас хули урамĕсене пĕрин хыççăн теприне гитлеровецсенчен тасатаççĕ.

* * *

Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлă наступление вăйлатса пынă. Пирĕн чаçсем, малалла куçса пырса, пайн иркине çав тери хăвăрт атакăланă хыççăн шоссе çулĕсемпе чугун çулсен узелĕ пулса тăракан Мариамполь хулине туртса илнĕ. Совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем янлă фронтпа Шешупа шывĕ урлă каçнă. Çав шывăн хĕвеланăç хĕрринче халăх пурăнакан чылай пунктсене, вăл шутра нимĕçсен тĕреклетнĕ пунктне, грунт çулĕсен узелне — Людвинов хулине туртса илнĕ. Вилнисене кăна шута илсен те, тăшманăн 2.500 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Нимĕçсен 20 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен гуппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тыткăна нумай илнĕ, вĕсен шутĕнче нимĕçсен 406-мĕш пехотнăй полкĕн командирĕ Адольф фон Папен. Дусь тата Дилуйце кӳллисен районĕнче нимĕçсем хаяррăн хирĕç тăнă. Совет боецĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та нимĕçсемпе çапăçса шоссе çулĕсен Красна узелне туртса илнĕ. Каялла чакакан нимĕçсем тупăсем тата ытти çар техники нумай пăраха-пăраха хăвараççĕ.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Тăшман хăйĕн группировкине эсэсовецсен «Викинг», «Вилĕ пуç» «Герман Геринг» ятлă танковăй дивизийĕсем тата темиçе пехотнăй соединени хушса парса вăйлатнă та, вăйлăн хирĕç тăрса çапăçать. Совет çарĕсен наступленине чарма хăтланса, нимĕçсем пĕтĕм вăя хураççĕ. Анчах та гитлеровецсем совет чаçĕсене хирĕçле атакăлама хăтланнисем пĕри те ăнăçлă пулман. Пирĕн пехотинецсем тата танкистсемпе артиллеристсем, ăста маневрсем туса, тăшмана аркатмаллах пыра-пыра çапаççĕ. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем чугун çулсемпе шоссе çулĕсен паха узелĕ пулса тăракан Седлец хулине штурмласа туртса илнĕ. Çавăн пекех нимĕçсене Минск Мазовецкий хулинчен çапса кăларнă. Пирĕн çарсем халăх пурăнакан ытти 500 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — Отвоцк хули, Воломин хули (Варшаваран 15 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), Радзымин хули. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Çурçĕр флочĕн авиацийĕ Çурçĕр Норвегири Киркенес портне йышлăн вĕçсе кайса тапăннă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнине пула нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 7.000 тонна таякан 3 транспорчĕ шыва путнă. Унсăр пуçне тата тăшманăн 2 транспортне самаях вăйлăн сиенленĕ. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 4 самолетне персе ӳкернĕ.

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем Финн заливĕнче тăшманăн подводнăй лодкине шыва путарнă. Подводнăй лодка экипажĕнчен 6 нимĕç матросĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

ВЦСПС-па Центросоюзра

ВЦСПС-па СССР тата РСФСР Центросоюзĕ государство валли çăмарта сутăн илес тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура мала тухнă Вăрмар райпотребсоюзне (председателĕ Федоров юлташ, профсоюз райкомĕн председателĕ Григорьева юлташ) ВЦСПС-па Центросоюзăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата преми памалла тунă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне Александр Михайлович Василевские Совет Союз Геройĕн ятне парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре фронтсен операцийĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çав операцисене пула тунă ӳсĕмсемшĕн Совет Союзĕн Маршалне Александр Михайлович ВАСИЛЕВСКИЕ, ЛЕНИН орденĕ тата «ЫЛТТĂН ÇĂЛТĂР» медалĕ парса, СОВЕТ СОЮЗ ГЕРОЙĔН ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Геройне Арми Генералне Иван Данилович Черняховские иккĕмĕш „Ылттăн çăлтăр“ медалĕпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Верховнăй Главнокомандовани панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн Совет Союзĕн Геройне Арми Генералне Иван Данилович ЧЕРНЯХОВСКИЕ иккĕмĕш «ЫЛТТĂН ÇĂЛТĂР» медалĕ парса наградăлас, бронзăран бюст туса унăн тăван çĕршывĕнче постамент çине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн маршалĕсемпе генералĕсене Совет Союз Геройĕн ятне парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Верховнăй Главнокомандовани панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн çаксене, ЛЕНИН орденĕпе «ЫЛТТĂН ÇĂЛТĂР» медалĕ парса, СОВЕТ СОЮЗ ГЕРОЙĔН ятне парас:

1. Арми Генералне Иван Христофорович БАГРАМЯНА
2. Арми Генералне Андрей Иванович ЕРЕМЕНКĂНА
3. Совет Союзĕн Маршалне Иван Степанович КОНЕВА
4. Совет Союзĕн Маршалне Константин Константинович РОКОССОВСКИЕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Сталин юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Чăваш АССР-ĕнчи Муркаш районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, паттăр Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсемпе хавхаланса, хамăрăн Хĕрлĕ Çар хăватне тĕреклетме хăйсем перекетленĕ укçа-тенкĕрен 1.160.000 тенкĕ, вăл шутра 510 пин тенкĕ укçан тата 650 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хыврĕç. Укçа пухасси малалла пырать.

Сире, Сталин юлташ, хамăрăн Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн нумай çулсем хушши пурăнма ырă сывлăх сунатпăр.

ВКП(б) Муркаш райкомĕн секретарĕ В. ИЛЬИН.

Райсовет исполкомĕн председателĕ Г. ФЕДОРОВ.

Чăваш АССР-ĕ, Муркаш
ВКП(б) Муркаш райкомĕн секретарьне ИЛЬИН юлташа
Райсовет исполкомĕн председательне ФЕДОРОВ юлташа

Муркаш районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, Хĕрлĕ Çар фондне пама 510 пин тенкĕ укçа тата 650 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пухнăскерсене, манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен пĕлтерĕр.

И. СТАЛИН.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Сталин юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Чăваш АССР-ĕнчи Вăрмар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Эсир, Иосиф Виссарионович, ертсе пыракан пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнӳсемпе хавхаланса, хăйсем перекетленĕ укçана Хĕрлĕ Çар валли боевой техника тума 762.101 тенкĕ государство банкне хыврĕç.

Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем Эсир, Иосиф Виссарионович, ертсе пынипе тăшмана çĕмĕрсе тăкасси çине, этемлĕхĕн ирсĕр тăшманне — нимĕç фашизмне çĕнтерес сехет килесси çине çирĕппĕн шанса тăрса, районри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен уйхирĕсенче хастарлăн ĕçлеççĕ.

Сире, Иосиф Виссарионович, халăхсен телейлĕхĕшĕн нумай çулсем пурăнма ырă сывлăх сунатпăр.

Вăрмар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем хушнипе:

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ СМИРНОВ.

Райсовет исполкомĕн председателĕ БИКТИМИРОВ.

Чăваш АССР-ĕ, Вăрмар
ВКП(б) райкомĕн секретарьне СМИРНОВ юлташа
Райсовет исполкомĕн председательне БИКТИМИРОВ юлташа

Вăрмар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, Хĕрлĕ Çар валли боевой техника тума 762.000 тенкĕ пухнăскерсене, манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен пĕлтерĕр.

И. СТАЛИН.

ХРОНИКА

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче йышăннă Указĕ тăрăх, Чăваш АССР-ĕнчи çĕнĕрен тунă Муркаш тата Чурачăк районĕсен административлă-территорилле составне çирĕплетнĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ тăратнă тăрăх, Муркаш районĕн составне çак ял Совечĕсене кĕртмелле тунă: Элĕк районĕнчен—Матьăк, Панкли, Шĕвĕш тата Йӳçкасси ял Совечĕсене; Сĕнтĕр районĕнчен — Атапай, Кашмаш, Муркаш, Оринино, Пашалукасси, Çатракасси ял Совечĕсене; Ишлей районĕнчен—Шурча, Янăш, Оточево, Тивĕш, Хăймалакасси, Шетмĕпуç, Ярапайкасси ял Совечĕсене; Советски районран — Чуманкасси тата Тойгильдино ял Совечĕсене.

Чурачăк районĕн составне çак ял Совечĕсене кĕртмелле тунă: Çĕрпӳ районĕнчен — Тукай, Вăрманкас-Чурачăк, Йĕкĕрвар, Кушкă, Пĕрремĕш Вăрманкас, Ямаш, Паваркасси, Пысăк Чăраш тата Чурачăк ял Совечĕсене; Шăхасан районĕнчен — Высоковка ял Советне, Дмитриевка ялĕсĕр пуçне, Малти Антавăш ял Советне, Чуракасси ял Советне, Туçи-Чуракасси ялĕсĕр пуçне, Шăхаль, Шуркасси ял Совечĕсене тата Анат Сурăм ялне; Красноармейски районран — Метикасси, Тĕрер, Янчеллă ял Совечĕсене тата Чăмаш, Шорка, Çорткасси ялĕсене.

Ишлей районĕнчи Ямайкасси ял Советне тата Шăхасан районĕнчи Туçи-Чуракасси ялне Красноармейски района куçармалла тунă.

Шăхасан районĕнчи Анат Сурăм ял Советне Сурăм ял Совечĕ тесе ят памалла тунă.

* * *

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче йышăннă Указĕ тăрăх, Чăваш АССР-ĕн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнар тата Кӳпеш ял Совечĕсене пĕчĕклетсе, Сорм ял Совечĕ тунă.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

Чăваш АССР-ĕнчи уйрăмах палăрнă учительсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 150-мĕш номерĕнче).

28. Александра Владимировна Владимировăна — Çĕмĕрле районĕнчи Егоркино пуçламăш шкулĕн заведующине.
29. Елизавета Тимофеевна Волковăна — Красноармейски районри Чатукасси пуçламăш шкулĕн заведующине.
30. Анфиса Никитична Волковăна — Шупашкарти çичĕ çул вĕренмелли чăваш шкулĕн директорне.
31. Пантелеймон Яковлевич Волкова — Чкаловски районри Алманчă пуçламăш шкулĕн учительне.
32. Зоя Сергеевна Вотяковăна — Октябрьски районри Шупашкар Ĕсмĕл пуçламăш шкулĕн заведующине.
33. Мария Михайловна Гавриловăна — Çĕмĕрлери 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительницине.
34. София Степановна Гвоздковăна — Сĕнтĕрвăрри вăтам шкулĕн учительницине.
35. Ольга Александровна Гнидинăна — НКВД-ăн Улатăрти ача приемникĕн-распределителĕн начальникне.
36. Нестор Семенович Гранацкие — Шупашкар райçутĕç пайĕн инспекторне.
37. Александра Евдокимовна Григорьевăна — Советское ялĕнчи вăтам шкул учительницине.
38. Георгий Григорьевич Григорьева — Муркаш районĕнчи Йўçкасси вăтам шкулĕн вĕренў пайĕн заведующине.
39. Андрей Михайлович Гурьянова — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Каркçырми пуçламăш шкулĕн заведующине.
40. Ангелина Григорьевна Даниловăна — Октябрьски районри Шĕнерпуç вăтам шкулĕн учительницине.
41. Павел Александрович Евдокимова — Çĕмĕрле райçутĕç пайĕн заведующине.
42. Константин Евлампьевич Евлампьева — Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместительне.
43. Анисия Михайловна Егоровăна — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хурашвашри çичĕ çул вренмелли шкулăн учительницине.
44. Елена Егоровна Егоровăна — Вăрнар районĕнчи Сендимиркино пуçламăш шкулĕн заведующине.
45. Матрена Александровна Ежовăна — Комсомольски районри Çўлти Кикеç вăтам шкулĕн учительницине.
46. Вера Осиповна Еремеевăна — Красноармейски райçутĕç пайĕн заведующине.
47. Ирина Петровна Ермошкинăна—Канашри 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн вĕренў пайĕн заведующине.
48. Анисия Ипполитовна Ефимовăна — Канаш районĕнчи Янкăлчă вăтам шкулĕн директорне.
49. Анна Ивановна Ефремовăна — Вăрнар районĕнчи Вăрманкасри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
50. Мария Ивановна Железковăна — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашнерти çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
51. Хиония Клементьевна Железковăна —Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительницине.
52. Клавдия Никитична Запруднаяна — Шупашкарти арçын ачасен 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительницине.
53. Павел Федорович Здорнова — Етĕрнери çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.
54. Александра Петровна Захаровăна — Улатăр районĕнчи Явлейри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
55. Варвара Александровна Ивановăна—Етĕрне районĕнчи Кăкшăмри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.
56. Лидия Алексеевна Ивановăна — Сĕнтĕрвăрринчи пуçламăш шкулăн учительницине.
57. Павел Алексеевич Иванов-Панкова—Етĕрне районĕнчи педагогика кабинечĕн заведующине.
58. Семен Федорович Иванова — Шупашкарти хĕрачасен 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительне.
59. Тамара Степановна Ивановăна — Вăрмар районĕнчи Тупахри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорне.
60. Федора Осиповна Ивановăна — Шупашкарти арçын ачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительницине.

(Малалли пулать).

Комбайнсемпе жнейкăсене пĕр чарăнусăр ĕçлеттермелле

Республикăра тырă вырас ĕç мĕнле пырать

Августăн 1-мĕшĕ тĕлне, малтанлăха илнĕ сведенисем тăрăх, республикăри колхозсем 68.414 гектар ыраш вырнă. Вăл шутран машинăсемпе 9.422 гектар вырнă. Комбайнсемпе вырма Канашпа Вăрмар МТС-ĕсем кăна тытăннă-ха.

Ыраш вырас ĕçре Чурачăк районĕ малта пырать, унта 3848 гектар вырнă, плана 19,9 процент тултарнă. Ун хыççăн пыракан Калинино районĕ тырă вырмалли плана 19,5 процент, Елчĕк районĕ 19,0 процент, Чкаловски район 18,7 процент, Шăхасан районĕ 16,6 процент, Комсомольски район 15,2 процент тултарнă.

Ыраш вырас ĕçе уйрăмах Улатăр, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Шăмăршă районĕсем вăраха ярса пыраççĕ. Ку районсенче çаплах «тырă пулса çитессе» кĕтсе лараççĕ, хаклă вăхăта сая яраççĕ.

Республикăра ыраш вырса пĕтернĕ колхозсем те нумай ĕнтĕ. Вĕсем халĕ авăн çапма тата государствăна тырă леçме тытăнаççĕ. Малта пыракан колхозсен ĕçĕ тырра массăллăн вырма тытăнма тахçанах вăхăт çитнине кăтартса парать.

Тырă вырса пĕтерессе кĕтмесĕр, ăна капана хывас, авăн çапас ĕçе пуçласа хĕрўллĕн туса пымалла. Чи малтанхи тырра государствăна памалла. Анчах çак тĕп йĕркене пăхăнманнисем халех палăраççĕ ĕнтĕ. Канаш районĕнчи «Комсомолец» колхозра кăçалхи тырра 38 центнер çапнă та салатса пĕтернĕ, государствăна леçсе паман.

Çакă вăл государство умĕнче айăпа кĕни пулать. Ку тĕлĕшпе партипе правительство кăтартса панине кашни колхозах çирĕп пăхăнса пымалла.

Молотилка ĕçе тытăнчĕ

Йывăр пуçлă, нумай пĕрчĕллĕ ыраш, тулă тата урпа çине пăхса савăнаççĕ пирĕн колхозниксем.

Вăрçăн йывăр кунĕсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсенчен кая юлма юрамасть. Вăйлă тырпул тумалла та, Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшмалла. Çакăн пек шухăш-кăмăлсем колхозниксен чĕринче.

Тырăсем пиçсе çитрĕç ĕнтĕ. Чăнах та, вĕсем çине пăхма савăнăçлă. Кăçал гектартан 100 пăт тĕштырă пухса илме шанчăк пур. Анчах та çине тăрса, вăй хурса ĕçлес пулать. Тырпулсене пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртесси — ытла та ответлă ĕç. Пирĕн колхозра ĕçлеме пултаракансем 112 колхозник, вĕсенчен нумайĕшĕ хĕрарăмсем, арçынсем сахал. Лашасем те нумаях мар, пĕтĕмпе 41 лаша пур. Колхозăн 3 жнейка, пĕр молотилка, кўлмелли урапасем, шăналăксемпе михĕсем тата ытти хатĕрсем те çителĕклĕ.

Ыраш вырма эпир июлĕн 20-мĕшĕнче тухрăмăр. Чи малтан бригадирсем, звеньевойсем хăйсен участокĕсенче тырă пиçсе çитнине тĕрĕслерĕç. Малтанхи кун пиçсе çитнĕ вырăнсене 15 гектар вырнă. Алăпа 121 çын выраççĕ, кĕреплеллĕ çавасемпе 40 çын, машинăпа виçĕ çын ĕçлет. Çĕмел тăвакансем пулса ĕçлеме вăтă колхозниксене уйăрнă.

Вырнă тырра итеме турттаратпăр. Малтанлăха кĕлте кўнĕ çĕрте 6 лаша пулчĕ, капан тунă çĕрте 3 çын ĕçлерĕç. Ыраша вырса пĕтернĕçемĕн, кĕлте кўрекенсен йышне ўстерсе пытамăр, каярах 33 çын ĕçлерĕ. Халĕ эпир авăн çапма пуçларăмăр. Малтанхи кунсенчех тăвată лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа çапма тытăнтăмăр. Кашни звено тыррине уйрăмăн капана хывнă, çапассине те уйрăмах çапатпăр. Çапла вара кашни звено мĕн чухлĕ тырă туса илни паллă пулать.

Чи малтанхи задача вăл — государствăна тырă парса татасси пулать. Çавăнпа та авăн çапма тытăнсанах колхозăн чи малтанхи таса тыррине государствăна паратăмăр. Пирĕн «Новая жизнь» колхозăн государствăна обязательнăй йĕркепе 210 центнер тырă памалла. Тырă парас тĕлĕшпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе 7 кун хушшинче парса татма шутлатпăр. Ку тĕлĕшпе уйрăм бригада ĕçлет.

Чăнах та, ĕçĕн срокĕсем кĕске. Çавăнпа та плана тĕрĕс, срокра пурнăçлас тесен, колхозниксен ĕçне пĕлсе тата лайăх йĕркелемелле, бригадăсемпе звеносенче çирĕп дисциплина тумалла. Звеносемпе ĕçлесси —пирĕн колхозра тĕп йĕрке. Уйхир ĕçĕн 3 бригадинче 6 звено, вĕсене участоксем уйăрса панă, кашни колхозник хăйĕн участокĕнче ĕçлет.

Колхозниксем ирхине участоксем ыраса ан çўретчĕр тесе, кашни колхознике участоксем çумне çирĕплетнĕ. Кашни бригадăн хăйĕн план-графикĕ пур, унта кам ăçта ĕçлесси паллă. Кĕлте кўме тытăнсан, Портасий Иванов, Терентий Поляров, Никита Семенов хăйсем мĕн тумаллине пĕлеççĕ, вĕсем хăйсене капан тума çирĕплетнине авăн пĕлсе тăраççĕ. Молотилка барабанĕ çавăрăнма тытăнсанах, Семен Щукин ĕçе тытăнчĕ. Петр Ефремов, Фока Кудрявцев — тырă хуралçисем.

Колхозра дисциплина лайăх. Колхозниксем ĕçе кар тухаççĕ, тухăçлă ĕçлеççĕ. Вĕсем валли столовăй тунă. Ку тарана çитиччен ĕçе сăлтавсăр тухмасăр тăнисем пулман. Ĕçкунĕсен минимумне кашни колхозник, колхозница тултарса пырать. Ĕçкунĕсен минимумне кам мĕнле тултарса пынине колхоз счетовочĕ Димитриев юлташ диаграмма тăрăх кăтартса пырать. Кам ĕçе тухман, унăн ячĕ тĕлĕнче тăракан графа пушă, кам ĕçлеме тухнă, унăн графине хĕрлĕ тĕспе паллă тунă. Пĕр ĕçкунĕ хутшăнсан, пĕр сантиметр сарлакăш çинче тăваткăл хĕрлĕ паллă пулать. Халĕ лайăх ĕçлекенсем 150—160 ĕçкунĕ тунă.

Колхозра тăрăшса ĕçлекенсем лайăх пурăнаççĕ. Вăрçăччен колхозница Вера Иванова, Ульяна Захарова, Анна Васильева вутшанкăран начар пурăнатчĕç. Халĕ вĕсем ытлăн-çитлĕн вутă хатĕрлерĕç, çимелли те çителĕклĕ вĕсен. Нумаях пулмасть колхоза отечественнăй вăрçă участникĕ лейтенант Степан Захаров килсе кайрĕ. Вăл нумай колхозниксем патĕнче пулчĕ. Вĕсен ĕçне курса савăнчĕ.

— Хĕрарăмсем, эсир пирĕн вырăна юлтăр. Лайăх тăрăшатăр, пултаратăр, — терĕ лейтенант.

Д. УГИНЕВА,
Калинино районĕнчи Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхоз председателĕ.

Вăрнарсен чĕнĕвне сўтсе-яваççĕ

ИШЛЕЙ, августăн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрнар районĕнчи колхозсемпе хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсене чĕнсе каланине кашни колхозрах анлăн сўтсе-яваççĕ. Çак паха пуçарăва ырласа, социализмлă ăмăртăва анлăн сараççĕ.

Районри пур колхозсенче те ыраш вырас ĕç пырать. Уйрăмăнах Тăрăн ялсоветĕнчи колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. «МОПР» колхозра икĕ кун хушшинче 57 гектар вырнă. Кунта икĕ жнейка ĕçлет. Машинист А. Петров юлташ нормăпа 3,5 гектар вырас вырăнне 5,5 гектар вырать. Михайлов машинист та кашни кунах 4,2 гектар вырать. Çурлапа выракан Н. Иванова кулленхи нормăна 200 процент тултарать. Колхозри клубăн заведующийĕ Ф. Чугунова колхозницăсене каннă вăхăтра хаçат-журналсем вуласа парать. Вăрнарсем чĕнсе çырнине вуласа панă хыççăн кунта кашни колхозниках хăйĕн нормине ирттерсе тултарнă. Чугунова юлташ хăй те ĕç нормине 200—250 процент тултарса ĕçлет.

«МОПР» колхозра кам мĕнле ĕçленине кăтартакан хăма тунă. Ун çине лайăх ĕçлекенсене çыраççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхозра та вăрнарсем чĕннине сўтсе-явнă. Вĕсем халĕ ыраш вырма шурăмпуç килнĕ чухне тухаç, çĕ те тĕттĕм пулсан тин кĕреççĕ. Ыраш вырас ĕçе вăтă çынсем те хутшăнаççĕ. 65 çулти А. Филиппов колхозник çурлапа 0,10 гектар вырăнне 0,12 гектар вырать. И. Павлов — 0,15 гектар, Степанова юлташ 0,13 гектар выраççĕ.

Буденный ячĕпе тăракан колхозра ыраша алăпа вырнипе пĕрлех кĕреплеллĕ çавапа çулаççĕ. К. Петров пĕр кунта 0,45 гектар çулнă.

Анаткас Маркари «Правда» колхоз ĕнер 5 лав çĕнĕ тырă государствăна леçсе пачĕ. Ыран «Красный плуг» тата Владимир Ильич ячĕпе тăракан колхозсем те 5-шер лавпа государствăна ыраш леçеççĕ.

В. ГУСЬКОВ.

Кунне 85 çĕмел тăвать

Елчĕк районĕнчи «Сатурн» колхоз членĕ Поликарп Куркин вată, Отечественнăй аслă вăрçăччен вăл колхозра ĕçлеме тухман. Вăрçă çулĕсенче вара вăл колхозри ĕçрен юлмасть. Час-часах ĕç нормине ытлашшипех тултарса ĕçлет. Ыраш вырнă чухне нормăпа кунне 25 çĕмел тумалла, Куркин юлташ июлĕн 30-мĕшĕнче 85 çĕмел тунă.

Нормăна виçĕ хут ытла тултарнă хыççăн, вăл çапла каларĕ:

— Çĕнтерўшĕн, тăшман пуçне ватасшăн ĕçлетĕп. Хĕрлĕ Çар пысăк çĕнтерўсем тăвать, эпир кунта начар ĕçлеме пултараймастпăр. Эпĕ пăхса çитĕнтернĕ 6 ывăлăм вăрçăра, тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Манăн мĕнле те пулин вăйлăрах ĕçлесе, ывăлсене пулăшас килет. Тырпула вăхăтра пухса илсе Хĕрлĕ Çара ытларах апат-çимĕç парассишĕн тăрăшатпăр.

П. КОЗЛОВ.

Пысăк хастарлăхпа

Чурачăк районĕнчи Паваркасси ялсоветне кĕрекен «Красный флот» колхоз членĕсем ыраш вырнă чухне тăрăшса ĕçлерĕç. Колхозра виçĕ бригада, бригадăсем звеносене уйăрălса ĕçлеççĕ. Ăмăртса ĕçлени ĕç тухăçлăхне хăпартать. П. Николаева. Ф. Маркелова, Н. Васильева ыраш вырнă çĕрте кашни кунах 2-шер норма тултарса ĕçлерĕç.

53 çулти М. Ларионов кладовщик пулса ĕçлет. Вăл тырăсене кĕлете йышăнма лайăх хатĕрленнĕ. Кĕлете шуратнă, тасатнă. Çапнă тырра вăл амбара пĕтĕмпех виçсе йышăнать. Хăй ĕçĕнчен пушансан, ут таврашĕсемпе урапасем юсать.

В. АФАНАСЬЕВ.

Пучахра 65 пĕрчĕ

ШАХАСАН. Матьшўри «Молодой колхозник» колхозăн уйхирĕнче кăçал тырă питĕ лайăх çитĕнчĕ. Суйламасăр илсе шугласа пăхсан та, кашни пучахра ыраш 65 пĕрчĕрен кая мар. Халĕ колхозниксем ăна пулнă тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Тырра жнейкăсемпе, çурласемпе выраççĕ тата 60 çын кĕреплеллĕ çавапа çулать.

Тырă вырма тухнă кунран пуçласах колхозра ача ясли уçрĕç. Унта пурĕ 50 ача çўрет.

В. ИГНАТЬЕВ,
Колхоз агрономĕ.

Тырă вырнă çĕрте стена хаçачĕ тухать

ШАХАСАН. Тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртес ĕçре стена хаçачĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çапна МТС-ри 3-мĕш номерлĕ трактор бригадинчи «НАТИ» стена хаçачĕн редакторĕ Михайлов юлташ тĕрĕс ăнланса илнĕ. Кăçал вăл хăйсен бригадинче 10 номер стена хаçачĕ кăларнă. Тырпулсене пухса кĕме хатĕрленнĕ вăхăтра кăна икĕ номер тухнă. Тырă вырма тухнăранпа хаçата уйхирте кăлараççĕ.

Хаçат хăйĕн страницисенче тырпулсене пухса кĕртес ĕçре малта пыракан тракторисчĕсемпе комбайнерсен опытне, ăмăрту итогĕсене анлăн çутатса пырать. Кунтăр пуçне хаçатра «Хисеп хăми» тунă. Унта ĕçри стахановецсен ячĕсене çырса пыраççĕ. Çавăнпа пĕрлех кахалсене критиклеççĕ.

Большевикла пичетĕн вăйĕ — халăхпа тачă çыхăнса тăнинче. «НАТИ» хаçат массăпа тачă çыхăнса тăрать. Çавăнпа хаçатăн авторитечĕ те пысăк, ăна юратса вулаççĕ.

Анчах та хăшпĕр трактор бригадисенче стена хаçачĕсем кăларас ĕçе тивĕçлипе хăпламаççĕ-ха. 7-мĕшпе 9-мĕш бригадăсенче кăçал мĕнпурĕ те 2-шер номер çеç тухнă. Çак хаçатсен редакторĕсем Иванова Павлов юлташсем хăйсен ĕçĕпе пачах интересленмеççĕ. Вĕсем хаçат ĕçне тракторисчĕсемпе комбайнерсене явăçтарман. 2-мĕш, 8-мĕш бригадăсенче те (редакторĕсем Ефремовпа Павлов юлташсем) çулаккăн вĕçленнĕренпе те стена хаçачĕсем кăларман.

Партин МТС-ри пуçламăш организацийĕ стена хаçачĕсене ертсе пырас ĕçе манăçа хăварнă. Çакă ĕнтĕ пуçламăш парторганизаци вырăнти пичет ĕçне тивĕçлипе ертсе пыманнине кăтартса парать.

Халĕ, уйхирте хĕрў ĕç пынă вăхăтра, пуçламăш парторганизаци секретарĕсен, агитколлектив руководителĕсен стена хаçачĕсене ертсе пырас тата пулăшас ĕçе вăйлатмалла.

В. ВЕСЕЛОВ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 30-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă:

Кутанс хулинчен кăнтăралла наступлени туса пыракан çарсем Лангроннра союзниксен ытти çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Кутанс хулипе Лангронн хули хушшинчи çул пĕтĕмĕшпех союзниксен аллинче. Тăшманăн Суль шывĕнчен кăнтăртарахри чăсĕсене çавăрса илнĕ те халĕ вĕсене çине тăрсах пĕтерсе пыраççĕ, çав чаçсем çавăрса илнĕ ункăран тухса тарма пĕтĕм вăя хурса хăтланаççĕ.

Союзниксен хĕвеланăç енчен наступлени туса пыракан çарĕсем Сьенњ шывĕ урлă каçса кайнă. Перси пункчĕ тата Пенсиамби çулĕ союзниксен аллинче. Тесси районĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Унтан хĕвелтухăçнелле пирĕн çарсем Сен-Васюр-Сель районĕнче Сель шывĕн икĕ енĕпе тепĕр миля малалла куçнă.

Июлĕн 29-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ кунĕпех союзниксен наступлени тăвакан çарĕсене пулăшса тăнă, çавăн пекех тата тăшман объекчĕсене атакăланă.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 31-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсен танковăй колонни, 12 миля ытла малалла куçса, Авранш хулине кĕрсе кайнă. Тепĕр танковăй колонна Бреаль хулинчен кăнтăралла куçса пырать, çав колонна Гранвиль хулине çитесси 3 миля кăна юлнă. Габрэ, Перси тата Тесси-сюр-Вир районĕнче çаплах йывăр çапăçусем пыраççĕ.

Комон хули районĕнче союзниксен çарĕсем Сен-Мартен-де Бесасран хĕвелтухăçнерехри çўллĕ вырăна туртса илнĕ. Куайе хули районĕнче июлĕн 30-мĕшĕнче каçхине хаяр çапăçу хыççăн тăшманăн атакине сирсе янă.

Авиаци тăшманăн вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: паян 8-мĕш армири Инди дивизине кĕрекен чăсĕсем Флоренци хулинчен хĕвеланăçнерехре Арно шывĕ патнелле малалла куçнă, Эмполи хулипе юнашар ларакан ялсене кĕнĕ, халĕ вĕсем Монтелупо хули патне çывхарса пыраççĕ. Флоренци хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ункти çўллĕ вырăншăн çаплах йывăр çапăçусем пыраççĕ. Фронтăн çав участокĕнче нимĕçсен хаяр контратакисене сире-сире янă, тăшмана йывăр çухатусем кўнĕ. Тибр шывĕн хĕвеланăç хĕррипче союзниксен çарĕсем малалла куçнă, Анрьярио хулипе çулйĕрсен центрне тытса илнĕ. Фронтăн Адриатика участокĕнче 8-мĕш армире тăракан Итали çарĕсем тăшманăн икĕ контратакине сирсе янă, йышăнса тăракан позицисене хăйсен аллинчех тытса хăварнă. 5-мĕш арми фрончĕн участокĕнче патрульсем çапăçнă тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă.

Союзниксен тактика авиацийĕ çурçĕр Италире тата çапăçусен районĕнче чугун çул кĕперĕсене тата ытти кĕперсене те, транспорта, тăшман суднисене, тĕрлĕ вăрçă объекчĕсене тапăннă. Çавăн пекех авиаци тăшманăн Югославири çулйĕрĕсемпе тăшман çарĕсем тăракан районсене тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Флоренци хулинчен хĕвеланăçнерехре акăлчансен 8-мĕш армийĕнче тăракан Инди дивизийĕн чăсĕсем Пезăпа Эльса хушшинчи района (Эмполирен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре) тăшманран тасатнă. Кунта тăшман хирĕç тăракан темиçе пĕчĕк вырăн кăна тăрса юлнă. Флоренци хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре акăлчансен 8-мĕш армийĕн чăсĕсем вăйлă çапăçусем хыççăн пысăк мар, анчах паха участоксем туртса илнĕ. 8-мĕш арми фрончĕн ытти участокĕсенче тата американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче патрульсем активлăн çапăçнă тата тăшман çине артиллерирен персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсем ĕнер Венгрипе Югославири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ МЮНХЕНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Европăри авиацийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.200 ытла бомбардировщик Мюнхен районĕнчи, Вăтам Германири ытти пунктсенчи вăрçă объекчĕсене, çавăн пекех тата Францири аэродромсене тапăннă. Бомбардировщиксене истребительсен пысăк вăйĕсем хўтĕлесе пынă. Çав операцире пĕтĕмпе 2000 самолет ытла пулнă пулĕ тесе шутлаççĕ.

ВИС УТРАВĔ — СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕН ДАЛМАЦИ ÇЫРАНĔ ПАТĔНЧИ БАЗИ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Далмаци çыранĕсем çывăхĕнче выртакан Вис (Лисса) утравне нимĕçсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Çав утравран Англипе Америка тата Югослави çарĕсен бази туса хунă. Çак утрав çинчи базăпа усă курса, Далмаци çыранĕ патĕнчи нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларман ытти утравсене туртса илессишĕн кĕрешме лайăх.

ГИММЛЕР ПАЛАЧ ÇАРАТНĂ УКÇАНА ПЫТАРСА ХĂВАРМА ВАСКАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио пĕлтернĕ тăрăх, çакăн пек хыпарсем илнĕ: Гитлерăн шалти ĕçсен министрĕ тата гестапо руководителĕ Гиммлер Аргентинăри банксене хăйĕн укçине питĕ нумай куçарнă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ МУКДЕН РАЙОННЕ ТАПĂННИ

ВАШИНГТОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). США çар министерстви çапла пĕлтерет: паян «Вĕçекен крепость Б—27» йышши хăватлă бомбардировщиксем, американецсен авиацийĕн 20-мĕш соединенийĕнче тăраканскерсем, Мукден районĕнчи (Манчжури) промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Мĕнле сиен кўни çинчен калакан тĕплĕ хыпарсем çук-ха.

ФИНЛЯНДИРИ АРЕСТСЕМ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Свенска Моргонбладет» хаçат çапла çырать: Хельсинки хулинче Финляндин виçĕ питех те паллă гражданинне арестленĕ. Вĕсене вăрттăн тухса тăракан хаçат сарнăшăн айăплаççĕ. Ку хаçат Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа малалла тăсмалла мар тесе агитацилет. Тытса хупнисем хушшинче — Нильс Мейнандер, Финляндин информаци управленийĕн начальник заместителĕ пулнăскер, тата паллă литература критикĕ Барк.

КĔСКЕН

▲ Кăçалхи майăн 11-мĕшĕнчен пуçласа Германи çарĕсен Италире 250 танк, хăй тĕллĕн куçса çўрекен 300 тупă, танксене хирĕç тăмалли 450 йывăр тупă тата тĕрлĕ калибрлă 650 тупă пĕтнĕ.

▲ Америка çарĕсем Тиниан утравĕ çинчи Тинин хулине туртса илнĕ. Япони çарĕсене 5 миля пысăкĕш территори çине хупăрласа кĕртсе çавăрса илнĕ.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Канаш районĕнчи «Комсомолец» колхоз председателĕ П. М. Матвеев обязательствăсем тăрăх государствăна тырă паман, çав вăхăтрах кăçалхи тырра 38 центнер çапнă та колхозниксене аванс шучĕпе валеçсе панă тата ытти çĕре те салатса пĕтернĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине пăснăшăн «Комсомолец» колхозăн председательне Матвеева арестлесе суда панă.

* * *

Шупашкар районĕнчи «КИМ» колхоз председателĕ В. Е. Волков ăратлă ăйăрпа хăйне кирлĕ çĕре вĕçĕмсĕрех çўренĕ тата тĕрлĕ йывăр ĕçсенче те усă курнă. Çавна пула ăратлă ăйăр вилнĕ. Волкова çавăншăн суда панă. Суд ăна пĕр çулталăклăха тĕрмене хупмалла тунă.

Халăх паха произведенисем кĕтет

1

Совет Союзĕнчи пур писательсем пекех, чăваш писателĕсем те Отечественнăй вăрçăн пирвайхи кунĕсенчех хамăрăн тăван çĕршыва хўтĕлекенсен ретне тăчĕç. Нумай писательсем тискер тăшмана хирĕç çапăçма алла хĕçпăшал тытрĕç, — вĕсенчен хăшпĕрисем тăван халăх телейĕшĕн çапăçса пуçĕсене хучĕç, — хăшĕсем малти линире окопри салтаксем валли кăларакан хаçатсенче ĕçлеççĕ. Пирĕн писательсем çак виçĕ çул тăсăлакан аслă вăрçăра хăйсем совет халăхĕн шанчăклă, хастарлă ывăлĕсем пулнине, хамăрăн тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн юратса уншăн чуна пама хатĕр тăракан хĕрўллĕ патриотсем пулнине кăтартрĕç, — ахальтен мар 10 писатель ытла Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илнĕ, хăшĕсене Правительство икшер наградă та панă.

Писателĕн тĕп хĕçпăшалĕ — сăмах. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пирĕн чăваш писателĕсем çак хĕçпăшалпа епле усă курнине, вĕсен аллинче вăл мĕн тери çивĕч, витĕмлĕ пулнине илсен, эпир халь çакна калама пултаратпăр: писательсем хăйсен хĕçпăшалĕпе пĕлсе, хăюллăн усă курнă; вĕсен сăмахĕ хĕрўллĕ те витĕмлĕ пулнă. Писательсем хăйсен ĕçĕпе тискер тăшмана — нимĕç захватчикĕсене аркатса çĕнтерме пулăшса пынă. Вĕсен сулăмлă сăввисене, калавĕсене, очеркĕсене, фельетонĕсене вуншар пин боецсемпе офицерсем куллен вуланă, вĕсем тăрăх тăшмана курайми пулма, тăван çĕршыва татах та хытăрах юратма вĕреннĕ, писателĕн сăмахĕсене асра тытса çапăçăва кайнă. Илер пĕр йĕркепе ят: Ухсай, Хусанкай, Долгов-Хударсем, Алагер, Талвир, Пахчась, Дубрэвин, Ильбек т. ыт. те — фронтри хаçатсенче ĕçлесе, малти линири боецсем пекех пулнă, вĕсен аллинчи перо штыкпа танашнă.

Пирĕн писательсен фронтри ĕçĕсем çинчен, вĕсен произведенийĕсене боецсем епле йышăнни çинчен вĕсем хăйсем тăнă чаçсенчен ырласа çырса янисем сахал мар пулнă.

Анчах ку — ĕçĕн пĕр енĕ çеç-ха. Писатель — вăл чăнах та писатель пулсан—хаçатсенче статьясем, вак сăвăсемпе очерксем, пĕчĕк калавсемпе фельетонсем çырса пичетлесе тăнипе çырлахма пултараймасть. Халăх умĕнче вăл çапах та парăмлă пулса тăрать.

Халăх унтан Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтне, çав вăрçă çынсене епле улăштарнине, паттăрсем (фронтра та, тылра та) епле çуралса ўснине кăтартакан питех те паха, хĕрўллĕ произведенисем ыйтать.

Пури-ха пирĕн ун пек произведенисем?

Чăнах та, çак виçĕ çул хушшинче пирĕн писательсем сахал çырнă теме çук. Тен, вĕсен ĕçĕнче нихçан та çак çулсенчи пек творчествăллă çĕкленў пулман?! Хăшпĕрисем хăйсен чи аплă, ăнăçлă произведенисене шăпах вăрçă вăхăтĕнче çырчĕç. — Илер Хусанкайăн «Таня» поэмине, Уйăпăн «Салтак амăшне», Ĕçхĕлĕн «Амăрткайăкне». Вĕсен творчествăлă багажĕнче кун пек произведенисем ку таранччен пулман-ха вĕт! Прозаиксем хушшинче те çавăн пекех çĕкленў палăрчĕ: Чалдунăн «Фронтра» сборникĕ, Хударăн «Çурхи калавĕсем», Асланăн «Аслати», Ф. Уяр калавĕсем, Ситтăпа Ахтубай очеркĕсем тата ытти те.

Ытти искусствăсемпе (театр, музыка, живопись) танаштарсан та, пирĕн литература чăннипех те çак хаяр вăрçă кунĕсенче пысăк çитĕнўсем турĕ ĕнтĕ, ун çинчен тавлашмалли çук.

Анчах пиртен мĕн чухлĕ ыйтнă тăрăх пăхсан эпир, писательсем питех те сахал ĕçленĕ-ха. Сахал çырнă, событисемпе çынсене анлăн, тĕрĕссĕн, пур енлĕн кăтартакан произведенисем паман. Халăх пиртен питĕ нумай кĕнекесем кĕтет. Халăх умĕнче эпир пысăк парăмра. Çав парăма пирĕн тивĕçлипех тўлесе татмалла!

2.

Виçĕ уйăх каялла Чăваш АССР Совнаркомĕ хамăрăн республика 25 çул тултарнă тĕле чи лайăх произведенисем çырас тĕлĕшпе правительство конкурсне туса ирттерме йышăнчĕ. Çак ĕнтĕ вăл халăх ыйтни, халăхăн заказĕ пулса тăрать.

25 çул хушшинче чăваш халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе епле ўсĕмсем туни çинчен, хуçалăхпа культура тĕлĕшпе епле çитĕнўсем патне çитни çинчен, çак 25 çул хушшинче чăваш халăхĕ мĕн тери паттăр ывăл-хĕрсем ўстерни çинчен ку статьяра калама кирлĕ те мар пулĕ. Вĕсене пурте пĕлеççĕ. Çав ўсĕмсемпе çитĕнўсем çинчен, чăваш халăхĕн паттăрĕсем, вĕсем тăван çĕршывăн тĕрекĕпĕн, унăн ирĕклĕхĕшĕн, телейĕшĕн епле хăватлăн кĕрешни çинчен пирĕн лайăх кĕнекесем çырас пулать...

Нумай предприятисем ўсĕç Чăваш çĕршывĕнче. Вĕсемпе пĕрлех техникăри интеллигенци, пиншер стахановецсем — производствăн чи паллă мастерĕсем ўсрĕç. Вăрçă вăхăтĕнче вĕсем фронт валли мĕн кирлине туса памашкăн ырма-канма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Литературăра пур-и вĕсем пирĕн? Çук!

Çирĕм пилĕк çул хушшинче ял сăн-сăпачĕ улшăнчĕ çеç мар, вăл пачах çĕнĕлле, урăхла, социализмла хуçалăх пулса тăчĕ. Колхозсем пулнипе кăна вăрçă вăхăтĕнче фронтпа çĕршыв валли çителĕклĕ продовольстви парса тăма май килнĕ. Анчах ялăн çĕнĕ сăн-сăпачĕпе, ялти çĕнĕ çынсене эпир, писательсем, питех те сахал кăтартса панă-ха. Ялти çĕнĕ çынсене, совет саманинче ўснĕ çынсене, Октябрь ăрăвне тўсме çук сахал кăтартнă эпир.

Отечественнăй аслă вăрçă çинчен, çапăçура ўссе чапа тухнă геройсем çинчен виçĕ çулталăк хушшинче эпир пысăках çырнă ĕнтĕ. Хăшпĕр повеçсемпе калав кĕнекисемсĕр, поэмăсемпе сăвă сборникĕсемсĕр пуçне, ку хушăра пирĕн очеркла литература самаях аталанчĕ. Уйрăмăнах хамăрăн землякĕсем — Совет Союзĕн Геройĕсем çинчен çырса кăларнă кĕнекесене палăртас пулать. Анчах çапах та эпир чăваш халăхĕн ывăл-хĕрĕсем çак аслă вăрçăра тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн епле хăватлăн çапăçнине тулли кăтартса парассинчен аякра тăратпăр-ха. Ĕç — уйрăм геройсен çапăçури ĕçĕсем çинчен хроникăлла çырса кăтартнинче мар, — пирĕн вăрçă геройĕсене пĕтĕçтерсе, типласа, вăйлă художествăллă образсем туса кăтартмалла. Пирĕн халăх юмахĕсемпе халлапĕсенчи, былинăсенчи пек, эпосла вăйлă образсене кăтартма вăй çитерес пулать.

Тыл пурнăçне вара эпир пачах та манса кайнă пек пултăмăр. Тылри геройсем çинчен пысăк произведенисем мар — йĕркеллĕ пĕр очерк та çырман вĕт! Мĕн тунă пирĕн тылра пурăннă писательсем — калама хĕн!

Литературăри жанрсене илсен, пирĕн уйрăмăнах драматурги питех те кая юлса пырать. Прозăпа поэзи кĕнекисем вăрçă вăхăтĕнче вуншар тухнă ĕнтĕ (эпир вĕсене те çителĕксĕр тесе шутлатпăр-ха), анчах пьесăсем... пачах та çук. Вăрçă пуçланнăранпа та Айзманăн пĕчĕк пьеси-пе Мранькан тепĕр пьеси çеç тухнă. Кунта калама çук пысăк прорыв.

Академи театрĕ ĕçлет. Халĕ Калинин районĕнче унăн колхозри филиалĕ уçăлать. Драмкружоксем республикипе 1.000 ытла шутланаççĕ (ку шута тата шкулсенчи кружоксем кĕмеççĕ-ха). Лартмалли пьесăсем çук. Куншăн чăн малтан драматургсен ответ тытмалла, анчах театрпа Искусство ĕçĕсен Управленийĕн те айăпĕ пурах. Вĕсем хăйсем валли пьесăсем таçтан сасартăк килсе ўкессе кĕтсе ларнă пек пулнă. Анчах пьесăсем хальхинчен те ытларах кирлĕ. Театрсемпе драмкружоксем валли паянхи куна, фронтри тата тылри паттăрсене кăтартакан пьесăсем çителĕклĕ парасси — пирĕн писательсен питех те ответлă тата васкавлă задачи пулса тăрать.

Çавнашкалах тата пирĕн ача-пăчапа çамрăксен литератури кая юлса пырать. Вăрçă вăхăтĕнче ачасемпе çамрăксем валли оригиналлă произведенисем питĕ сахал тухнă. Тĕрĕссипе, ытарласа ачасем валли тата ачасем çинчен эпир çырман та, темелле. Чăвашгосиздат кăларакан «книжка-малышка» серинче çеç уйрăм произведенисем тухрĕç, анчах вĕсем те çĕнĕрен çырнисем мар.

Эпир хамăрăн ачасене сулăмлă патриотсем, социализмлă государствăн тивĕçлĕ гражданĕсем, пултаруллă строительсем, хастарлă боецсем пулма вĕрентесшĕн, чăн-чăн коммунистла воспитани парасшăн. Çак пархатарлă ĕçре илемлĕ литература питех те пысăк вырăн йышăнать. Вăл литературăна пирĕн писательсен тумалла!

3.

Правительство конкурсĕ пуçланнăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Конкурсăн срокĕсем çывхарсах килеççĕ, — ĕнтĕ вăхăт пĕтĕмпе те 5 уйăх çеç юлчĕ. Анчах писательсем çине тăрса ĕçлени сисĕнмест-ха. Конкурс комиссин аллине пĕр произведени те килмен.

Вăхăт кĕтмест, писатель юлташсем! Кая юлсан — каю шăтать тенĕ пек, эпир кунран кун «вăхăт пур-ха, ăлкĕрĕпĕр» тесе пурăнсан, халăха çав тери кирлĕ, аплă, паха произведенисем параймăпăр. Çавăнпа та пирĕн çине тăрсах ĕçлес пулать.

Республика 25 çул тултарнине чăваш халăхĕ халиччен пек те мар пысăк çитĕнўсемпе кĕтсе илĕ. Фронтра та, тылра та çĕнĕ геройсем нумай палăрĕç, çĕнĕрен çĕнĕ паттăрла ĕçсем пулĕç. Пирĕн, писательсен, ку паллă уяв тĕлне халиччен пек мар паха произведенисем çырса, халăха парне кўмелле.

Эпир ку ĕçе тума пултаратпăр, пирĕн хамăрăн пĕтĕм творчествăлла вăйсене пухса ĕçлемелле.

Леонид АГАКОВ,
писатель-орденоносец.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00292 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 0. 59Х42 а. л. Тираж 14.400 экз.